Республикăра

# Коррупципе çураçу пулмастех

***Чиновник тата коррупци. Шел, чылай чух çак икĕ сăмах халăх ăстăнĕнче пĕр пĕлтерĕшлĕ янăрать.***

***Çапах та çирĕпленнĕ шухăша аркатмаллах. Раççейĕн çĕнĕ премьерĕ çитес вăхăтрах федераци шайĕнче коррупципе кĕрешекен орган йĕркеленесси çинчен пĕлтернĕччĕ. Чăваш Ен Правительстви авăн уйăхĕнчи йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн республикăра антикоррупци политикине пурнăçлакан орган Юстици министерстви шутланать. Шăпах çак ведомство коррупципе кĕрешессин стратегине тата тактикине туса хатĕрлет. Çакăнпа çыхăннă ыйтусене ЧР юстици министрĕпе Валерий ПЕТРОВПА сӳтсе яврăмăр.***

## "Тымарĕпех" кăкламалла

**– Пӳтсĕр çынсене çĕнĕ йышши техника, паянхи технологисем пулăшса тăнă саманара коррупципе кĕрешме питĕ кăткăс паллах. Валерий Павлович, Чăваш Енри çак политикăн тĕп шăнăрĕ мĕн?**

– Тĕпре – влаçăн мĕн пур тытăмĕн тĕллевлĕ ĕç-хĕлĕ. Тепĕр хут калатăп: ĕç тăвакан, саккун кăларакан, муниципалитет влаçĕн мĕн пур тытăмĕн пĕр шухăшлăн ĕçлемелле. Президент хăй ĕçлеме пуçланă пĕрремĕш кунранпах çак ыйтăва сăнаса тăрать. Чи малтанах влаç ĕçне, бюджет укçине тăкакланине уçăмлăх кĕртме тĕллев лартнă вăл.

Пĕтĕмпех финанс министрĕн йышăну пӳлĕмĕнче черет пĕтнинчен пуçланчĕ. Мĕншĕн тесен Правительство тĕллевлĕ программăсемпе ĕçлеме тытăнчĕ. Çакă отрасль принципне тĕпе хурса влаç ĕç-хĕлĕн пĕлтерĕшне палăртма май пачĕ, çавна май укçа-тенкĕ уйăрасси те тĕллевлĕн кăна мар, системăпа пулса пырать. Вĕрентӳ, Сывлăх сыхлавĕ, Строительство, Культура, Социаллă хӳтлĕх т.ыт. министерствăсем федерацин программисемпе тĕллевлĕ ĕçлеме кăмăл турĕç. Чăваш Енре хăйĕн республика программисем кун çути курчĕç, муниципалитетсен бюджечĕсен те "халăх енне çаврăнма тиврĕ". Тĕслĕхрен, шкула е ытти объекта виçĕ влаçăн укçи-тенкипе тăваççĕ. Çакăн пек ларутăрура кашни пуса тĕрĕслеме май пур. Çавна май коррупцие йăл илме пулăшакан сăлтав та сахалланчĕ.

**– Çак меслет мĕн таран тӳрре тухрĕ?**

– Программăпа тĕллев меслетне тĕпе хурса бюджета планласси тĕнче практикинче коррупципе кĕрешмелли никĕс пек тахçанах çирĕпленнĕ. Палăртма кăмăллă: Чăваш Ен ку енĕпе чылай мала кайрĕ. Аса илер-ха, 2000 çулта шăпах пирĕн республика общество укçи-тенкине йĕркелес тытăмри çĕнĕ "пилотлă" проектсен конкурсĕнче çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕ (Раççейри 53 субъект хушшинче), 2006 çулта çак тытăмра профессионал пулнине тепĕр хут çирĕплетрĕ. Ку енĕпе тĕплĕ ĕçленĕрен Чăваш Ен пуриншĕн те "витĕр курăнакан" пулса тăчĕ кăна мар, çакна Пĕтĕм тĕнчери финанс институчĕсен вун-вун эксперчĕ, çав шутра Пĕтĕм тĕнчери аталану банкĕ те çирĕплетет, çав вăхăтрах финанс рынокĕн субъекчĕ пек пысăк гаранти статусне тивĕçрĕ. Чăваш Республикин облигацийĕсем 2005 çултанпа Раççейĕн биржа рынокĕнче ĕçлеççĕ, кăçал вара Чăваш Ен предприятийĕ ют çĕршыв банкĕнчен Раççей Федерацийĕн Правительствин гарантийĕсĕрех кредит илчĕ. Мĕн каланине хускатнă ыйтупа çыхăнтарас пулсан – çакă пĕтĕмпех чиновниксен таврашĕнче коррупци шайĕ пĕчĕк пулнине кăтартать.

Çав вăхăтрах бюджет тăкакĕсем ĕç-хĕле вĕçлессипе тачă çыхăннă, çакă общество укçи-тенкине мĕнле тăкакланине витĕр курма май парать, налуксене вăрласран хӳтĕлет. Аса илтеретĕп, Чăваш Ен хысни финанс проектĕнче пĕрремĕш хут çĕнтерсен 7 миллион долларлăх "пуянланчĕ" – бюджетри уçăмлă тата тухăçлă хутшăнусемшĕн тивĕçрĕ вăл çак премие. Бюджет политикин яваплăхĕ ӳсрĕ, çавна май халăх бюджетран илекен пулăшăвĕн пахалăхĕ те лайăхланчĕ. Чи лайăх тĕслĕх – пĕтĕм республикăна çут çанталăк газĕпе тивĕçтерни, вĕрентӳ тытăмĕнче 140 çĕнĕ объект туни, çемье врачĕн 600 офисĕ уçални. Темшĕн çакă пĕтĕмпех коррупци кĕрешĕвĕн тĕп кăтартăвĕ пулни пирки чылайăшĕ шухăшламасть.

Мĕн пур тытăмри влаçăн финанс ĕç-хĕлĕн уçăмлăхĕ – коррупцие пусаракан çутă пайăрки. Вăл, ĕмĕрсен хушши пурăнаканскер, тĕппипех пĕтмесен те обществăшăн тата патшалăхшăн хăрушă мар виçене çити чакĕ. Çакăн патне ăнтăлмалла та. Палăртса хăваратăп: патшалăх тата муниципалитет саккасĕсене вырнаçтарас енĕпе йĕркелекен аукционсем вăрттăн ан иртчĕр тесе Чăваш Енре тĕллевлĕ ĕçленĕ. Республика информаци технологийĕсен тытăмĕнче малта тăнине кура темиçе çул каялла "электрон правительствине", документсен электрон çаврăнăшне ĕçе кĕртрĕ, эпир патшалăх тата муниципалитет управленийĕн тухăçлăхне ӳстертĕмĕр кăна мар, граждансене влаç йышăнăвĕсем пирки хăвăрт пĕлме, экономикăри тата социаллă сферăри çĕн йĕркелӳсене хутшăнма майсем туса патăмăр. Çакăн пек тытăм продукцие вырнаçтарас енĕпе çеç мар, пулăшупа та тивĕçтерес тĕлĕшпе тендер выляса илессишĕн кĕрешме ирĕк парать. Çакă та юлашки вăхăтри курăмлă çитĕнӳ.

**– Ĕç тăвакан влаç саккун кăлараканнипе ку енĕпе еплерех килĕштерсе ĕçлет?**

– Питĕ ăнăçлă. Кăçал Чăваш Республикин "Коррупципе кĕрешесси çинчен" саккунне йышăнчĕ. Депутатсем çак усалпа кĕрешме кăткăссине тата пĕлтерĕшлине ăнланаççĕ, çавăнпах Правительствăпа пĕрле мĕн пур енĕпе хастар ĕçлеççĕ. Ака уйăхĕнче 2007-2010 çулсем валли тĕллевлĕ программа çирĕплетнĕччĕ. Çу уйăхĕнче Раççей Экономика аталанăвĕн министерстви административлă реформăна йĕркелесе пурнăçламалли планпа пăхнă мероприятисене тата проектсене суйласа илес енĕпе иртернĕ конкурса пĕтĕмлетрĕ. Республикăн 4 проекчĕ çĕнтерӳçĕсен йышне лекрĕ, çав шутра "Чăваш Республикинче 2007-2010 çулсенче коррупципе кĕрешессин тĕллевлĕ программин мероприятийĕсене пурнăçласси" проект та.

**– Программăпа пăхнă мероприятисен тĕп тĕллевĕ мĕнре?**

– Тĕп тĕллев – патшалăх тата муниципалитет влаçĕн органĕсенче коррупцие çуратакан сăлтавсене "тымарĕпех" кăкласси, республикăра пурăнакансен прависемпе интересĕсене хӳтĕлесси. Тĕпрен илсен, çакă право акчĕсене тата вĕсен проекчĕсене антикоррупци экспертизи витĕр кăлармаллине, коррупцие çуратакан сăлтавсен мониторингне йĕркелессине, граждансене тата организацисене патшалăх тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ĕç-хĕлĕ çинчен калакан информаципе тивĕçтерессине т.ыт. те пĕлтерет. Ансатрах каласан – пирĕн тĕрлĕ шайри влаçăн ĕç-хĕлĕ республикăра пурăнакансемшĕн уçă пултăр тесе вăй хумалла. Пĕлтерĕшлĕ çак программăна пурнăçа кĕртессишĕн мĕн пур тытăм – патшалăх влаçĕн органĕсем, вырăнти хăй тытăмлăх структурисем, прокуратура, ШĔМ, ФХСУ тата федерацин Чăваш Енри ытти органĕ – ĕçлет.

**– Должноçри çынсем коррупципе çыхăннă тĕслĕхсене аса илме пултаратăр-и?**

– Республика прокуратури пĕлтернĕ тăрăх, патшалăх влаçне, патшалăх тата муниципалитет служби интересĕсене хирĕçле тунă 373 преступление тупса палăртнă, шута илнĕ. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен должноçри çыннисен, федерацин потребительсен правине тата çын пурнăçне хӳтĕлес тытăмри надзор службин Чăваш Енри территори управленийĕн ертӳçи, суд приставĕсен, милици сотрудникĕсен, сывлăх сыхлавĕ, вĕрентӳ тата ытти тытăм ĕçченĕсен тĕлĕшпе уголовнăй ĕçсем пуçарнă, следстви пырать.

Сăмахран, Елчĕк район ШĔПĕн çулйĕрпе патруль службин инспекторĕ тĕлĕшпе уголовнăй ĕçе пăхса тухнă. Вăл служба тивĕçĕсене пурнăçланă чухне взятка илнĕ те водитель тĕлĕшпе административлă йĕркене пăсни çинчен протокол çырман. Çакăншăн ăна условнăй майпа 4 çуллăха ирĕклĕхсĕр хăварнă. "АПК аталанăвĕ" проектпа процентсене тӳлеме тăкакланă укçана саплаштарма тесе Улатăр районĕнчи пĕр депутат саккуна пăсса субсиди илнĕ тĕслĕхпе, хăйĕн йăнăшне чунран йышăннине тата çине тăрса каçару ыйтнипе кăна, уголовнăй ĕçе хупнă.

Вăрнар район администрацийĕн специалистне "Çамрăк çемье" программăпа пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатас текен çынсен списокне тунă чухне ятарласа йăнăш янăшăн судпа айăпланă. Ултавпа айăпланнăшăн кăçал суд тенкелĕ çине Мускаври автоçул институчĕн Атăлçи филиалĕнче ĕçлекенсем лекнĕ. Вĕсене условнăй майпа ирĕклĕхсĕр хăварнă. Çавăн пекех, прокуратура кăтартăвĕсем тăрăх, пĕр район администраци пуçлăхĕ тĕлĕшпе уголовнăй ĕç пуçарнă. Халĕ вăл айăплав материалĕсемпе паллашать. Ăна темиçе статьяпа айăплă тесе шухăшлаççĕ. Бюджет укçипе палăртнă тĕллевпе усă курманнипе çыхăннă уголовнăй ĕçсем те пур.

## Витĕр курăнни пуринчен те паха

**– Валерий Павлович, патшалăх тата муниципалитет структурисен ĕçĕ-хĕлĕ халăхшăн витĕр курăнмалла пултăр тесе тата мĕн тăватăр?**

– Тепĕр хут палăртам: республика Президенчĕ Н.Федоров çак должноçра ĕçлеме пуçласанах коррупципе кĕрешмелли витĕмлĕ мел тесе бюджета витĕр курăнмалла тума хистерĕ. Хысна укçипе тĕллевпе усă курман чиновниксемпе, çав шутра министрсемпе те, шелсĕр сыв пуллашрĕ. Халĕ те çак политикăна çирĕп тытать. Енчен те çак укçана шкулсем тума уйăрнă пулсан, ăна администраци ертӳçисем дачăсем лартма вăрлаймаççĕ.

Документсен нормăпа право базинче коррупцилĕх пуррине тĕрĕслеме общество пĕрлешĕвĕсен тата организацисен представителĕсен шутĕнчен никама пăхăнман экспертсене чĕнетпĕр. Вĕсенех патшалăх тата муниципалитет саккасĕсене пайлас енĕпе ĕçлекен конкурс тата аукцион комиссийĕсен ĕçне сăнама явăçтаратпăр. Вĕсем тата Чăваш Ен патшалăх служащийĕсен аттестацине иртерес тата Чăваш Республикин патшалăх граждан службин вакантлă должноçне ĕçе илес енĕпе йĕркеленнĕ комиссисен членĕсем те. Хальхи вăхăтра Юстмин республика правительствин йышăнăвĕн проектне хатĕрлет. Çак документра нормăпа право акчĕсене тата вĕсен проекчĕсене коррупцие хирĕçле экспертиза иртерессин йĕркине тата процедурине, çавăн пекех унта граждансем тата организацисем хутшăнассин меслетне кăтартнă.

Аукционсем паян уççăн иртеççĕ. Вĕсем çинчен пурте пĕлме пултараççĕ. МИХсенчен, Интернетран, Чăваш Ен патшалăх влаçĕн органĕсен порталĕнче ятарлă "Патшалăх заказĕ" ("Госзаказ") пай пур. "Патшалăх заказĕ" хаçат тухать. Çакă патшалăх тата муниципалитет политикин уççăнлăхĕ çинчен кăна мар, патшалăх интересĕсене хирĕç преступлени тума майсем сахалланса пынине те пĕлтерет.

**– Валерий Павлович, влаç граждансем коррупци çинчен мĕн шухăшланипе интересленет-и?**

– Паллах. Эпир пĕрмаях çынсен шухăшĕпе паллашатпăр. Соцтĕпчев иртеретпĕр. Нумаях пулмасть 3 пине яхăн çын хушшинче ыйтăм пулчĕ. Ыйтăм обществăра коррупцин пысăках мар пĕлтерĕшлĕ тĕслĕхĕсем анлă сарăлнине палăртрĕ. Çакă граждансем хăйсен йăла ыйтăвĕсене укçапа хавхалантарса татса паракан пур тытăма та пырса тивет. Çавăнпа пĕрлех "вăрттăн, экономикăн пĕлтерĕшлĕ секторĕ йĕркеленет. Тен, обществăн çак пулăмĕ, тĕпчев кăтартăвĕсем те çакна çирĕплетеççĕ, республикăри граждансен çурри коррупци пуррипе "çырлахать". Кунсăр пуçне çынсен тĕрлĕ соцушкăнĕ коррупци тĕлĕшпе тĕрлĕ шухăш калать. Кунта миçе çулта пулни, ăçта ĕçлени тата укçаллă пулни витĕм кӳрет. Коррупципе çамрăксем, предпринимательсем, студентсем, укçаллă çынсем "çырлахаççĕ". Çак тӳнтерле пулăм аслă ăрури çынсене вĕчĕрхентерет. Çакă нумай чухне пурнăçа ĕлĕкхилле виçнипе тата çак категорири граждансем укçа енчен пуян пулманнипе çыхăннă. Соцыйтăм кăтартăвĕсем тăрăх, граждансем коррупципе нумай чухне сывлăх сыхлавĕнче, вĕрентӳре, пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăхра тата йĕркелĕх органĕсенче, уйрăмах автоинспекцире, тĕл пулаççĕ. Тĕпчевсем коррупци хулара ялтинчен вăйлăрах аталаннине пĕлтереççĕ.

## Взятка паракансене те явап тыттараççĕ

**– Коррупципе кĕрешмелли çĕнĕ мерăсенчен хăшĕ тухăçлăрах пулма пултарать?**

– Административлă реформăна кĕртнĕ тĕллевсенчен пĕрне – патшалăх органĕсенчи коррупцие пĕтерессине – пурнăçлас тесен федерацин "Коррупципе крешесси" саккунне хăвăртрах йышăнмалла тесе шухăшлатăп. Соцыйтăм тăрăх, республика çыннисем патшалăх аппаратне, чиновниксен тăкакне тĕрĕслесе тăрассине хирĕç мар. Нумайăшĕ чиновниксен çывăх тăванĕсене предпринимательлĕхпе аппаланма чармалла тесе шутлать, çав вăхăтрах Анăçри обществăра çакăн пек чару çук. Граждансен ытларах пайĕ (85,3 процент) взяткăшăн, уйрăмах вĕсене илекенсене, уголовнăй майпа явап тыттармалла тесе каланипе килĕшетĕп. Анчах та взятка паракансем тĕлĕшпе те яваплăха вăйлатмалла. Çынсен çакна ăнланмалла: коррупци вăл – икĕ енĕн яваплăхĕ. Авалхи ăсчахсем çапла пĕтĕмлетнĕ: хăйсен ĕçĕшĕн сĕнекен пысăк хака хирĕçлеме тивĕçлĕх пур çынсем сахал. Паллах, çак ăслăлăх чиновниксене хӳтĕлесе калани мар. Çакă взятка паракансене вĕсем коррупципе çыхланнă чиновниксем йышланассине тӳпе хывнине аса илтерни. Раççей саккунĕсем чиновниксене парне паракансем тĕлĕшпе те явап тыттарассине вăйлатассине шанатăп.

**– Взятка паракансем тĕлĕшпе сирĕнпе килĕшмесĕр май çук. Çапах та çынсем лайăх пурнăçран çапла тумаççĕ.**

– Ку та тĕрĕс. Шăпах çавăнпа бюрократи, ирĕк паракан тытăмсен шутне пĕчĕклетес тĕлĕшпе нумай ĕçлеççĕ. Вĕсене пула çын кирлĕ хут илес тесе мĕн чухлĕ вăхăт тата нерв пĕтерет. Коррупципе кĕрешмелли витĕмлĕ мерăсенчен пĕри – коррупци тĕслĕхĕ çинчен анонимлă пĕлтерессине практикăна кĕртни тесе шутлатăп. Сăмахран, патшалăх влаçĕн органĕсенче "хĕрӳ лини" йĕркелесси. Ун урлă граждансем влаçри çынсем ĕç вырăнĕпе саккуна пăсса усă курни çинчен пĕлтерме пултарĕç. Тĕслĕхрен, çынсенчен саккунпа пăхнă пулăшу ĕçĕсемшĕн укçа илме хăтланнине, ытлашши документ ыйтнине тата ытти те. **Юстминра çакнашкал лини ĕçлет те ĕнтĕ, эсир çак номерсемпе шăнкăравлама пултаратăр: 62-41-67 тата 62-11-76.** Пĕлтерĕшлĕ информаципе эпир йĕркелĕх органĕсене пĕлтеретпĕр. Пурте пĕрле коррупципе кĕрешсен япăх мар кăтарту пуласса шанатăп.

**Л. СЕМЕНОВА калаçнă.**

Республика кунне хатĕрленсе

# Ял илемĕ – район тĕкĕрĕ

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

Халĕ вара çара уран урама тухса пăх-ха. Темиçе утăм тума та шикленмелле. Асăрханулла пулмасан урана мĕнпе те пулин суранлататăн. Урамра кантăк ванчăкĕ е пуш кĕленче, уçнă консерв банки тата ытти ăптăр-каптăр "хуçаланать". Пурнăç улшăнса пырать тетпĕр те культура çинчен манатпăр курăнать. Кил-çурт таврашĕнче кирлĕ мар çӳп-çапа вара хамăр çӳрекен урама тăкса варалатпăр.

Ял çывăхĕнчи пушă вырăна е укăлчана тухса пăхарха тата. Мĕн кăна ӳсмест пулĕ кунта: хупахĕ те, тал пиçенĕ те. Çулла кăна мар, хĕлле те хыт-хура тавралăх илемне пăсать.

Маларах ялсенче пĕчĕк пĕвесене те çу кунĕсем умĕн ял-йышпа пĕрле кар тăрса тĕпрен юсаса йĕркене кĕртетчĕç. Вут-кăвартан сыхланма, хуçалăх нушипе усă курма шыв кирлĕ пулнă-çке-ха. Халĕ вара çапла калаймăн. Хăш-пĕр ялсенче пĕвесем юхăнса кайнă, юшкăнпа тулнă. Шывĕ çук та пĕве урлă чăх та утса каçĕ.

Н.В. Федоров Президент Республика кунне кăçал пирĕн районта – Муркашра – иртерес пирки йышăну кăларчĕ. Çак пысăк уява пирĕн патра иртерме сăлтавĕ çук мар. Район нумай-нумай енĕпе çулсеренех ăнăçлă аталанса пырать. Муркашсен ĕçĕ-хĕлĕпе, пурнăçĕпе ыттисене паллаштармалли те сахал мар. Паллах, Тăван Республика кунне чыслăн паллă тума хамăр çĕршывран çеç мар, çавăн пекех чикĕ леш енчен те хăнасем килĕç. Çак уявччен вăхăт нумаях та юлмарĕ. Апла пулсан ăна тивĕçлипе кĕтсе илме паянах ĕçе кӳлĕнмелле. Ку тĕлĕшпе вара вăй хумалли сахал мар. Ял илемĕ – район тĕкĕрĕ. Хамăрăн ырă ята çӳлерех çĕклесчĕ, ялсене тирпей-илем кĕртесчĕ.

Хăнасем ял хуçалăх предприятийĕсене те çитсе вĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллашма кăмăл тăвĕç. Хăш-пĕр хуçалăхсенчи выльăх-чĕрлĕх фермисене йĕркене кĕртмелле: витесем таврашĕнче çамрăк вăрман хунавĕ евĕр çум ешерет. Хуçалăх тĕп усадьбине илсе пыракан çулсен хĕррине те йĕркене кĕртмелле.

Хăш-пĕр ялсенче Аслă Отечественнăй вăрçăран таврăнайман ентешĕсене чысласа палăк лартнă. Ку аван ĕнтĕ. Анчах та вĕсене юсаса илемлетмелле, чечексем лартса ӳстермелле.

Ялти культура вучахĕн çурчĕ тата ытти объектсенче те ĕçсем çук мар. Вĕсен çывăхĕнчи картасене юсамалла, клумбăсем йĕркелемелле.

Район центрне илсе çитерекен çул хĕрринчи ялсенче пурăнакансен хăйсен хушма хуçалăхĕнчи кил картисене йĕркене кĕртессипе тимлемелле.

Хаçат вулаканăм, материалпа паллашнă май, çак автор хăй ял илемĕшĕн мĕн те пулин тăвать-ши теме те пăхĕ. Эпĕ вара нимĕн вăтанмасăр, суймасăр çапла хуравлатăп кун пирки. Эпир, пĕр урамра пурăнакансем, тăван кĕтес илемлĕ пултăр тесе тимлетпĕр. Урамра обществăлла пĕр çăл пур. Ăна кӳршĕсемпе пĕрле пуçтарăнса тирпейлĕ те юсавлă тытатпăр. Çывăхарах пĕве те пур. Ăна та йĕркеллĕ тытса тăратпăр. Çак ĕçсене Н.С. Шишокин пенсионерпа Г.И. Шариков, Г.Г. Сорокин кӳршĕсемпе пĕрле пурнăçлатпăр.

Çавăн пекех кашни çуркуннех ял-йышпа пĕрле карта тытас е юсас, урамсене тирпейлес ĕçсене хутшăнатпăр. Çав тĕллевпе ялти кашни çемьерен 100-шер тенкĕ укçа пуçтарма калаçса татăлтăмăр.

Халĕ те Республика кунне тивĕçлипе кĕтсе илес тĕлĕшпе кăмăл-туйăм пысăк.

**А. ШАРИКОВ.**

Тереç ялĕ.

Саламлатпăр

# Эпир Сире паян та юрататпăр



Эпир хамăрăн хаклă та юратнă класс ертӳçине, Турай шкулĕнче ачасене математикăна вĕрентекен Римма Трифоновна Ершована сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн тухакан мĕн пур ырă туйăмсемпе саламлатпăр.

1974 çулта пединститут пĕтернĕ хыççăн Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Шупуç хĕрĕ пире, пĕчĕк шăпăрлансене, хăйĕн çунатти айне илчĕ. Хăй те ун чухне аслă класра вĕренекен шкул ачи пекчĕ. Пирĕншĕн, Анаткассинчи 19, Çаранçырмари 5 ачашăн, Римма Трифоновна 4 класран пуçласа 8 класс пĕтеричченех тăван анне вырăнĕнче пулчĕ. 8 класс хыççăн 4 ача кайрĕ. Вĕсем вырăнне Елшикран 9 ача килчĕ пирĕн класа. Илемлĕ те ырă кăмăллă класс ертӳçипе вăхăт иртни те сисĕнместчĕ. Мĕнле кăна мероприяти ирттерместчĕ пулĕ вăл класпа. Шупашкарта ăçта кăна пулмарăмăр пулĕ экскурсире: театрсемпе музейсенче, трактор тăвакансен заводĕнче. Питĕ активлă та хаваслăччĕ пирĕн класс. Шкул çулĕсене аса илсенех ума юратнă Римма Трифоновна тухса тăрать. Вăл тăрăшнипе ĕнтĕ эпир пурте шкула ăнăçлă пĕтертĕмĕр. Пурнăçра хамăрăн вырăна тупрăмăр. Эпир вăл класс ертӳçи пулса ертсе пынă пĕртен-пĕр класс пултăмăр. Эпир вĕренсе тухсан, юратнă вĕрентекенĕмĕр нумай çул хушши шкул директорĕн çумĕнче ĕçлерĕ.

Римма Трифоновна! Эпир Сире паян та юрататпăр, эс вĕрентни халĕ те асра. Тавах Сире пире ырă сĕнӳсемшĕн, пурнăçри йывăрлăхсене çĕнтерме вĕрентнĕшĕн. Пирĕнпе ăшшăн калаçса, умри иккĕленӳлĕхе сирнĕшĕн, хамăр пултарулăха курма пулăшнăшăн. Эсир хăвăрăн 2 хĕрĕрпе арçын ачăра кăна мар, пире те çын турăр. Çĕре çити тайма пуç Сире. Хĕрĕрпе кĕрӳшĕр те паян Сирĕнпе пĕрле шкулта ĕçлеççĕ.

Сире çирĕп сывлăх сунатпăр. Пурнăçăр вăрăм та телейлĕ килтĕр. Пире парнеленĕ телей саманчĕсем Сирĕн малашнехи пурнăç çулне çутатса пыччăр.

**1981 çулта вĕренсе тухнă, Эсир ертсе пынă класс ачисем.**